# АНМĂТТĂМ ЭП ЮХАНШЫВ ХĔРНЕ




1. Анмăттăм эп юхан та шывăн хĕрне —
   Шыв сулхăнĕпе ўснĕ те хăмла пур. *(2 хут)*

2. Килмĕттĕмччĕ, тăванăм, эп çак киле —
   Хампа пĕр вартан та тухнă тăван пур. *(2 хут)*

3. Аслă улăх тăрăх та пит çўрес мар —
   Ухлĕм тĕпĕсене те, ай, хăртас мар. *(2 хут)*

4. Питех çўлтен-çўлтен те калаçас мар —
   Атте-анне ятне те, ай, çĕртес мар. *(2 хут)*

5. Пĕлĕт юхать ĕнтĕ те, пĕлĕт иртет,
   Ман пуçăмри çаврака, ай, çĕлĕк пек. *(2 хут)*

6. Ĕмĕр иртет ĕнтĕ те, ĕмĕр иртет,
   Каç выртсассăн курнă та, ай, тĕлĕк пек. *(2 хут)*

7. Хура вăрман çийĕнче — хура пĕлĕт,
   Юхаймĕ-ши вăрманăн, ай, хыçнелле? *(2 хут)*

8. Эпир пĕчĕк чухне выляни-кулни
   Каяймĕ-ши ĕмĕрĕн, ай, тăршшĕпе? *(2 хут)*